**Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!**

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 118 N (4687) | *1998 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 16-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*



*Паллашăр: сирĕн умăрти ўкерчĕкре хресченсен хуçалăхĕсен "Кондурча" ассоциацийĕн доярки Мунавара Ишниязова. Çак дояркăн ятне районта нумайăшĕ лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ. Юлашки çулсенче çак хуçалăх дояркисем районта сĕт сăвакансен ăмăртăвĕнче малти вырăнсене йышăннинче М.Ишниязован тўпи те пысăк.*

*Н.Азизов сăнўкерчĕкĕ.*

## Çĕр хут илтиччен,

пĕрре курни аванрах, - çак çирĕплетў тĕрĕслĕхĕ хăйĕн çивĕчлĕхне çухатмасть, вăл вара шăматкун район администрацийĕнче черетлĕ семинар-канашлу иртнĕ май аса килчĕ, унта тĕп ветеринари врачĕсем, ветеринари енĕпе ĕçлекен участокри специалистсем тата сысна фермисен заведующийĕсемсĕр пуçне, хуçалăхсен тĕп экономисчĕсене те йыхăрнăччĕ, вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинчи тăкаксене хирĕçле технологисем, ытти çĕнĕлĕхсем çинчен ертўçĕсенчен е хаçатра пичетлениннчен çеç пĕлни тĕлĕнтерет. Çапах та тăкаксене чакарассишĕн шăп вĕсен, экономистсен, чи малтан тăрăшмалла вĕт. Акă Пĕчĕк Хăмăшлăри "Надежда" агрофирмăн сысна ферминче пулса, вĕсем çак тупăшлă отрасльте тăкаксене чылай чакарма пулнине хăйсем курса ĕненчĕç. Тата та лайăхрах кăтартусем тума пултарнă Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен ассоциацири сысна ферминче пулса, семинара хутшăннисен отраслĕн потенциллĕ майĕсем пирки палчах иккĕленў юлмарĕ пулĕ. Хуçалăх председателĕ Ф.Х.Мингалимов цифра даннăйĕсене тĕпе хурса, экономикăпа финанс ыйтăвĕсене татса парассинче ăнăçлă аталанакан отрасль пĕлтерĕшне кăтартрĕ. Администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев та сысна ĕрчетесси чи рентабеллĕ отрасле çаврăннинче çак хуçалăхăн тўпине уйрăм палăртрĕ тата ыттисене ку ĕçе хăйсем патĕнче çапла майпа йĕркелеме чĕнсе каларĕ.

Сысна ĕрчетессинче выльăхсене пăхмалли тата аталантармалли технологие çирĕп пăхăнсан кăна лайăх результатсем тума пултарни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Районти ял хуçалăх управленийĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен пайĕн ертўçи А.И.Ухваньков шăп çакăн çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Ку енĕпе М.Джалиль ячĕпе хисепленекен ассоциацире апатсем, çав шутра витаминлă эмел курăкĕсем хатĕрлессине тимлĕх уйăрни мухтава тивĕçлĕ.

Семинар-канашлăва хутшăннисем сыснасем самăртакан пĕрлешўре выльăхсене ўстерсе çитермелли тата самăртмалли тапхăрсем тăрăх требованисене пурнăçланине тепĕр хут курса, вĕсем лайăх кăтартусем тума шанăç кўнине ĕненчĕç. Кунта пынă калаçура пĕрлешўпе хуçалăхсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăну тытса тупăшлă ĕçлеме кирлине те палăртрĕç.

Семинара хутшăннисем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессин ытти отраслĕсенчи тăкаксене хирĕçле технологисем кĕртнин процесĕпе кăсăкланса паллашрĕç. Семинар-канашлура курнине тата илтнине вырăнсенче ĕçе кĕртни усăллă пултăрччĕ.

## Хулара санитари сехечĕ

Иртнĕ юнкун, октябрĕн 14-мĕшĕнче, хулара санитари сехечĕ иртгернĕ. Ĕç коллективĕсене кун çинчен маларахах телефонограмма ярса пĕлтернĕччĕ, чылайăшĕ ăна пурнăçланă (кĕркунне кашни çулах хулана тирпей-илем кĕртмелле). Çанталăк та аван пулчĕ, çил кăна кăшт кансĕрлерĕ.



Чи малтан ЦГСЭН коллективĕ тĕслĕх кăтартрĕ. Вĕсем тĕмсене касса тирпейлерĕç, типнĕ туратсене пуçтарчĕç, тротуара тасатрĕç. Яланхи пекех хулари шкулсемпе шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсем, ДЮКФП та хăйсен территорийĕсене тирпейлерĕç. Элеватор ĕçченĕсем те кĕреçесемпе, шăпăрсемпе "санитари сехетне" тухрĕç. Лаборатори, управлени аппарачĕ, пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш производство участокĕсем - никам та аяккинче юлмарĕ. Çўп-çапа тўрех трактор çине тиесе ăсатрĕç. Кўршĕсемпе çуммăн аш-какай комбиначĕн представителĕсем вăй хучĕç. Хăйсен территорийĕсене çаплах бытовиксем, медицина ĕçченĕсем, РСУ, Нурлатри нефтебаза, çул-йĕр управленийĕн, 53-мĕш СМУ коллективĕсем тирпейлерĕç. Машинăсем туса кăларакан завод ĕçе уйрăмах йĕркеллĕ пурнăçларĕ. Хăш-пĕр предприятисем территорисене кăнтăрла хыççăн тасатрĕç, тĕслĕхрен, нефть кăларакансем, ĕçе мĕнпур цех хутшăнчĕ.

Хăйсен территорийĕсене, производство базисене тирпей-илем кĕртес ĕçе хулари промышленность предприятийĕсем, организацисемпе учрежденисем чылайăшĕ хутшăнчĕç. Шел пулин те çуртсенче пурăнакансем çеç çак ĕçе хутшăнмарĕç, Гиматдинов урамĕнчи РСУ çурчĕсемсĕр пуçне.

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма



1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Хаçат хакĕ - **25 тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тўлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

**Çапла, хаçат çырăнтарасси пуçланчĕ, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

**КĔСКЕН**

## *Юбилей каçĕ - Хусанта*

Октябрĕн 12-мĕшĕнче литература тата искусство деятелĕсем, республикăри ученăйсем пирĕн ентешĕн, çыравçăн, критикăн Талгат Галиуллин академикăн юбилейне паллă тунă, вăл 60 çул тултарнă.

Г.Камал ячĕпе хисепленекен Тутар Патшалăх Академи театрĕнче иртнĕ каçа халăх питĕ нумай пуçтараннă, кунта студентсем, ученăйсем, писательсем, наукăпа искусство деятелĕсем, çаплах çыравçăн Çыранçи Чаллăри, Елабугăри, Чистайри, Сарман районĕнчи çывăх тусĕсемпе тăванĕсем те пулнă.

Пирĕн ентешсен ятĕнчен саламлă сăмахпа район администрацийĕн пуçлăхĕн аппарачĕн ертўçи Ф.Р.Ногуманова тухса калаçнă. Юбилей каçне çаплах районти Т.Бадыгин ертсе пыракан художество пултарулăх ăстисем те хутшăннă. Куракансене Роза Ахметзянова юрлани тата Татьяна Борзовапа Альфира Шайхисламова ташлани питĕ килĕшнĕ. Юбилей каçĕ тĕлĕнмелле ăшă ларутăрура иртнĕ, кунта пирĕн ентешĕн пултарулăхне тата ĕçне пысăк хак панă.

## Компьютерпа усă курма вĕренеççĕ

"Нурлатнефть" НГДУ вĕренўпе консультаци комбинатĕнче ЭВМпа усă куракансен иккĕмĕш ушкăнĕ вĕренме пуçланă. Пĕрремĕшĕ çуркунне вĕреннĕ.

Ку ушкăнта, малтанхинчи пекех, çирĕм çын ытла. Вĕсем НГДУн тĕрлĕ подразделенийĕсемпе цехĕсенчен, тĕп ĕç хыççăн эрнере тăватă хутчен вĕренеççĕ. 104 сехетлĕ программăпа вĕреннĕ хыççăн кашни компьютерпа усă курма хăнăхĕ: текст пуçтарма, программăсем тума, сканерпа ĕçлеме тата ытти те. Уйăх çурă хыççăн курсантсем ЭВМпа усă куракансен удостоверенийĕсене илĕç. Хальхи вăхăтра компьютеризаци НГДУн нефть промыслисене те "алла илнĕ", вĕренўпе консультаци комбинатне ăнăçлă ĕçленĕшĕн компьютер класĕ парнелени малашне те лайăх енчен çеç палăрĕ.

Унтан вара Интернета та кĕме пулĕ...

### Республика хыпарĕсем

#### Черетре индуссем

Хусанти "Электроприбор" завод кăларакан кăткăс авиаприборсем çинчен тĕнчипех пĕлеççĕ. Ахальтен мар ют çĕршывсен специалисчĕсем опыт пухма пирĕн пата çул хывнă.

Çак кунсенче Китайран килнĕ 31 "вĕренекен" 1 уйăх опыт илнĕ хыççăн тăван çĕрне таврăнать.

"Электроприбор" цехĕсем Инди делегацине кĕтсе юлаççĕ.

#### Тĕлĕнтермĕш техника

"Теплоконтроль" производство пĕрлешĕвĕ çĕнĕ кăткăс оборудовани "Теплоцентр" туса кăларнă. 40 пин тенкĕ тăракан "Теплоцентр" ăшăтмалли, шыв юхтармалли системăсене тĕрĕслесе тăракан хатĕр, çаплах хваттерсене пыракан ăшша та перекетлеме пулăшать. Азино микрорайонĕнчи Сафиуллинпа Сахаров урамĕсенче пĕрремĕш "Теплоцентр" вырнаçтарнă та ĕнтĕ.

Специалистсем шухăшланă тăрăх, асăннă хатĕрсен пуласлăхĕ пысăк.

**("Сувар" хаçатран).**

## Наркотиксене хирĕç иртекен эрне вĕçленчĕ

**РФ прокуратури тата Журналистсен союзĕ пĕлтернĕ наркотиксене хирĕç кĕрешмелли эрнене тĕпе хурса, районти тĕп больница та ăнăçлă ĕçлерĕ. Хулари шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсемпе Çамрăксен çуртĕнче пулнă тĕлпулу çак эрнене вĕçлерĕ. Унта районти тĕп больницăн, правăна сыхлакан органсен, район администрацийĕн представителĕсем хутшăнчĕç.**

# Чирлесен преступлени те тума пулать








Çамрăк ăрăвăн сывлăхĕпе пурнăçне хăрушлăх патне илсе çитерекен наркомани юлашки çулсенче пирĕн республикăра та çивĕч ыйту шутланать. Тĕлпулăва çакăн пек сăмахсемпе уçрĕ ăна йĕркелекенсенчен пĕри, районти тĕп больницăн эпидемиологĕ **Д.К.Андарова.** Малалла вăл иммунодефицит вирусĕ сарăлнин сăлтавĕ наркомани пулни çинчен каласа пачĕ.

- Раççейре ВИЧ - инфекци лекнисенчен 17 проценчĕ наркомансем. В.Покровский академик даннăйĕсем тăрăх, пĕр наркоман 15 çынна ВИЧ - инфекци ертет. Шутласа кăларма йывăр мар: пĕр çулталăк хушшинче чирлĕ пĕр наркоман 22 пин çынна чир ертме пултарать. Тепĕр йывăр ыйту - наркомансенчен хăрушă инфекци чирĕ - гепатитăн В тата С формисем - сарăлни, çак чир пĕвере сиенлетет.

Малалла этем организмне, уйрăмах çамрăккине, наркотиксем питĕ хăрушă витĕм кӳни çинчен районти тĕп больницăн врач-наркологĕ **С.И.Федотов** каласа пачĕ.

- Наркологи уйрăмĕнче 25 койка, вĕсенчен пĕри те пушă тăмасть. Ытларахăшĕ алкоголиксем ĕнтĕ, анчах та наркомансем те час-часах пулаççĕ. Учетра 14 - 18 çулсенчи 22 наркоман тăрать. Вĕсен хушшинче стажлă наркомансем те пур, нумаях пулмасть иккĕшĕ вилчĕç. Ытларах чухне вĕсем врач патне кая юлса пыраççĕ. Мĕнпе хăрушă-ха наркотиксем? Кашни хутĕнче организм дозăна ӳстерме ыйтать, мĕншĕн тесен кĕтнĕ киленӳ туйăмĕ çуралмасть. Наркотика организм питĕ хăвăрт хăнăхать, этем хăй тĕллĕн чарăнаймасть, наркотиксен тарçи пулса тăрать. Психикăна активлатакан хатĕрсемпе çын мĕн чухлĕ нумай вăхăт хушши усă курать, унăн психики çавăн чухлĕ каялла тавăрма май çук сиенленет, сиплев те нумай усă памасть.

ГРОВДăн çула çитмен ачасем хушшинче преступленисем тăвассине сирсе ярас тĕлĕшпе ĕçлекен пайĕн аслă инспекторĕ **М.М.Зайниев** ачасем наркотиксемпе усă курнин, токсикоманин конкретлă тĕслĕхĕсене илсе кăтартрĕ.

- Тупса палăртнă тата учета тăратнă фактсем чăннипе килĕшсе тăмаççĕ. Пурнăçра вĕсем чылай нумайрах. Йывăр ыйту - хулари ачасем. Каçхи дежурствăра эпир час-часах путвалсемпе подъездсенче туртакан тата ĕçекен ачасен ушкăнĕсене куратпăр. Дискотекăра яшсем те, хĕрсем те ӳсĕр пулни курăнать, туртни пирки вара каламалли те çук. Çакăнтан наркотиксемпе усă курасси те аякра мар.

Пĕлтĕр çакăн пек пулăм палăртнă: аслă классенче вĕренекенсем уроксенчен тарса путвала бензин шăршлама кайнă. Эпир шыраса тупнă вăхăтра вĕсем айваннăн кулатчĕç ĕнтĕ. Пирĕнпе пĕрле пулнă ашшĕ-амăшĕсем тĕлĕннипе хытса кайрĕç. Хăйсен ачисемшĕн вĕсене явап тыттарнă ĕнтĕ. Çамрăксене çапла калас тетĕп: çĕрле çӳрени лайăххи патне илсе çитермест. Ашшĕ-амăшĕсем вара вĕсен ачи ăçта тата кампа вăхăт ирттернине пĕлме тивĕçлĕ.

Наркоманин пĕр енĕ чир пулсан, тепĕр енĕ вара - преступлени. Наркомансен шучĕ ӳсни наркотиксемпе çыхăннă преступленисем ӳсесси патне илсе çитерет. Тĕлпулура çакăн çинчен хулапа район прокурорне пулăшакан **Д.В.Самигуллина** каларĕ.

- Халиччен республикăра тата пирĕн районта ытларах ӳсентăранран хатĕрленĕ наркотиксем - опий тата марихуана сарăлнă пулнă. Юлашки вăхăтра вара йывăр наркотиксем - кокаин, героин час-часах тĕл пулаççĕ. 1997 çулхи январь уйăхĕнчен наркотиклă веществосене "законсăр туса хатĕрленĕшĕн, упранăшăн, сутнăшăн тата ярса панăшăн" РФ çĕнĕ уголовнăй Кодексĕн 228-мĕш статйипе айăплаççĕ. Тĕплĕнрех каласан, хăйсене валли законсăр упранăшăн тата усă курнăшăн (0,2-0,3 грамм) 3 çул таран тĕрмене лартаççĕ, сутас тĕллевпе - 7 çула çитиччен, пурлăха туртса илсе е илмесĕр. Ытти чухне тата йывăртарах лару-тăру пулсан - тата та çирĕпрех айăплаççĕ. Администрацийĕн çула çитмен ачасемпе ĕçлекен комиссийĕн секретарĕ **Т.Ш.Гареева** ăнăçсăр çемьесенчи ыйтусене тимлĕх уйăрчĕ, вĕсем хăйсем час-часах ачасене киревсĕр ĕç тума,



правăна пăсма хистеççĕ вĕт. Ашшĕ-амăшĕсем ачасене воспитани парас тĕлĕшпе хăйсен тивĕçĕсене манаççĕ пулсан ачасем иртĕхсе каяççĕ. Çакă вара пĕтĕм çĕрте. Ачасене мăшкăл тата наркотиксем çинчен видео-телефильмсем курма чарма çук. Пĕр май çеç юлать: ачасене экрансем çинчи киревсĕрлĕхе пурнăçпа çыхăнтармалла марри çинчен вĕрентмелле.

Çула çитмен ачасемпе правăна сыхлакан тата медицина представителĕсен тĕлпулăвĕ хĕрӳ калаçу лару-тăрăвĕнче иртрĕ теме çук. Залран пĕр-икĕ ыйту çеç пачĕç. Кашни шкула районти тĕп больница уйрăмĕсем хатĕрленĕ "Наркотиксем кирлĕ мар" санбюллетеньсем пачĕç.

Саланнă вăхăтра эпĕ темиçе ачана ыйтусем патăм: "Çакăн пек мероприятисем наркотиксен хăрушлăхне ăнланса илме пулăшаççĕ-и? Кирлĕ-и вĕсем? Кунта хутшăннисенчен пĕр хут та пулин наркотик тутанса пăхнисем пур-и?" Кашни ыйту çине килĕшӳллĕ хурав пачĕç. Апла пулсан çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать: çамрăксем наркотиксем çинчен сахал пĕлеççĕ, кун çинчен вĕсемпе шкулта, килĕсенче калаçмаççĕ. Наркоманипе кĕрешес тĕлĕшпе çыхăнуллă ĕç те ирттермеççĕ. Çакă чи малтан ашшĕ-амăшĕсене сыхă тăма хистет: тен, сирĕн ачăр хăрушлăхра?

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

# "Хыттăн калăр: "Наркотиксем кирлĕ мар!"

Наркотиксене хирĕç иртекен эрне вăхăтĕнче Çамрăксен çуртĕнче ирнĕ тематикăллă дискотека чи интереслĕ мероприяти пулчĕ пулĕ. Кăна аслă классенче вĕренекенсем çапла шутлаççĕ.

Пĕрремĕшĕнчен, дискотека чăнахах та массăллă пулчĕ, кунта 400 яхăн çын пуçтарăнчĕ. Иккĕмĕшĕнчен, унăн содержанийĕ те çамрăксемшĕн интереслĕ пулчĕ. Тематикăллă дискотека йĕркелекен тата ăна ертсе пыракан - Нурлатри 2-мĕш номерлĕ шкулти физкультура учительници Елена Хвостова çапла каласа парать:




- Билетсене эпир маларахах, шкул тулашĕнчи ĕçĕсене йĕркелекенсем урлă 9-11-мĕш классенче вĕренекенсене салатса патăмăр. Аслă классенче вĕренекенсем вĕсене хапăлласах туянчĕç, хакĕ те хаклă мар - 4 тенкĕ çеç.

Дискотека вăхăтĕнче унта хутшăннисене наркотиксем çинчен каласа пачĕç, тĕрлĕ конкурссем вара хĕрсемпе яшсем ун çинчен мĕн шухăшланине палăртма май пачĕç. Наркотиксене хирĕç чи лайăх лозунг конкурсра, вĕсем вара 100 яхăнччĕ, чи лайăххисене парнесемпе чысларĕç. Çамрăксен хăш ушкăнĕ (ăçта пурăннине шута илсе) пуринчен хытăрах, "пĕтĕм Нурлат илттĕр", "Наркотиксем кирлĕ мар" тесе чĕнсе каланине кăшкăрма пултарать? Хăш микрорайон представителĕсем хăйсене лайăхрах тыткалаççĕ? Дискотекăра çаксене пурне те шута илчĕç. Администраци çумĕнчи çамрăксемпе ĕçлекен пай çамрăксене плакатсемпе тивĕçтерчĕ.

- Мероприятири лару-тăру çамрăксене пĕр-пĕринпе уççăн, шанса калаçма май пачĕ, - тет Е.Хвостова. - Туслă, ăшă лару-тăрăва пăсас текенсем пулмарĕç тесен те юрать.

Çамрăксем çакăн пек тематикăллă каçсем час-часах ирттерме кăмăл тунине ырламалла çеç. Анчах та кунта... пĕр чăрмав пур. Çамрăксемпе çула çитмен çамрăксем Çамрăксен центрне уçассине чăтăмсăррăн кĕтрĕç пулин те, вĕсен канăвне усăллă йĕркелес ĕçре йывăрлăх сиксе тухрĕ - çурта тара илнĕшĕн тӳлев питĕ пысăк. Унăн сăлтавĕ мĕнре-ши?

**Ф.ГАЛИМОВА.**

# Сирĕн сăнарта яланах савăнăç шевли вылятăр

## Вунăкунлăх иртрĕ, малта - ватă çынсен çулталăкĕ

Иртнĕ вунăкунлăх итогĕсене шăп ватă çынсен çывхарса килекен 1999 çулне тĕпе хурса хакламалла пулĕ.

Ватă çынсене ăçта тата мĕнле тимлĕх уйăрнăха? Кинемейсемпе мучисен асапне вăхăтлăха та пулин çăмăллатас тесе мĕнле мерăсем йышăннă?

Ватă çынсен вунăкунлăхне ирттересси çинчен ыйтăва администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин ертсе пынипе халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн сессийĕнче, çав кун умĕн иртнĕскерте, тĕплĕн те пĕтĕм енчен пăхса тухнăччĕ. Çаплах администраци пуçлăхĕн культурăпа социаллă ыйтусем тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ Н.Х.Абдуллин ертсе пынипе ваттисен вунăкунлăхне ирттерессипе йĕркелӳ комитечĕ палăртнăччĕ. Ăна ĕç коллективĕсен ертӳçисене пĕлтерчĕç тата вĕсене ирттерме майсем тупас задача палăртрĕç. Пенсионерсем хăйсемшĕн тăрăшнине, хисепленине туйччăр, çав кунсенче уяв сĕтелĕ хушшинче чей ĕçсе ларнă май пĕрпĕринпе ăшшăн каласса ларма пултăрччăр тесе администраци чĕнсе каланине районти предприятисемпе организацисен, хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсен коллективĕсенчен чылайăшĕ ырланине паян кăмăлпах палăртма пулать.

Районта 17 пин пенсионер шутланать. Вĕсенчен 980-шĕ пĕр организацире те шутланмаççĕ - кусем пĕтернĕ производство ветеранĕсем, Нурлата урăх хуласемпе районсенчен, хамăрăн районтан куçса килнисем тата ыттисем. Вĕсем валли октябрĕн 1-мĕшĕнче нумаях пулмасть уçăлнă искусствăсен шкулĕнче район администрацийĕн представителĕсемпе тĕлпулу ирттернĕ, унтан çав шкул преподавателĕсен, художество пултарулăхĕн ăстисен вăйĕпе йĕркеленĕ концерт кăтартнă. Октябрĕн 5-мĕшĕ Чулпан участокĕнчи больницăн геронтологи уйрăмĕнче уçă алăксен кунĕ пулса тăнă. Сахăр завочĕ, элеватор, апат-çимĕç комбиначĕ, сĕт-çу комбиначĕ тăратнă продукципе 45 çын валли апат-çимĕç пакечĕсем хатĕрленĕ, вĕсене çавăнтах пачĕç. "Ветеран" клуб членĕсем ватă çынсене питĕ илемлĕ концерт программипе савăнтарчĕç. Хулари пенсионерсем çав кунсенче тӳлевсĕр мунча кĕме, парикмахерски услугисемпе усă курма пултарчĕç. Ватăсен кунĕнче Нурлатри электричество çыхăну узелĕн коллективĕ лайăх пуçару турĕ.

Вĕсем К.Маркс проспекчĕнчи ветерансен 42 хваттерлĕ çуртне телефонсем кĕртме тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне кунта 20 телефон ытла вырнаçтарнă, связистсем ĕçе çак уйăхра вĕçлессе шантараççĕ.

Социаллă пулăшу уйрăмĕн тата социаллă хӳтлĕхĕн васкавлă пулăшу управленийĕн пенсионерĕсен çакăн пек категорийĕ пур - пĕччен пурăнакан ватă çынсем. Вĕсене те тимлĕх уйăрмасăр хăвăрмарăмăр. Коммерци структурисем хутшăннипе çавăн пек кашни ватă çынна апат-çимĕç пакечĕ патăмăр.

Пĕтĕмĕшле, пурлăхпа финанс йывăрлăхĕсене пăхмасăр, ватă çынсен вунăкунлăхĕ районта кăçал та маларахри çулсен шайĕнче иртрĕ. Пенсионерсем пĕлтернĕ тăрăх, вĕсен тăван коллективĕсем чăннипех ыркăмăллăх, хĕрхенӳлĕх кăтартнă, май пур таран пулăшнă. Анчах, шел пулин те, çавăн пек пĕр уяв та куе тепĕр ертӳçе е хуçалăха ӳпкелешнисĕр иртмест. Акă кăçал та "Тĕрнеç", "Алга", малтанхи "Элмет", "Заря" хуçалăхсен пенсионерĕсене ертӳçĕсем те, вырăнти самоуправленин Совечĕ те тимлĕх уйăрман. Хăйсен пенсионерĕсем тĕлĕшпе сӳрĕклĕх кăтартакан организацисем хулара та пур, вĕсен шутне, сăмахран, киносеть кĕрет. "Коопстроя" пĕтернĕ хыççăн унăн пенсионерĕсем пирки ыйтăва халиччен те татса паман.

Анчах Ватăсен кунĕ умĕн иртнĕ пĕрлештернĕ Советăн сессийĕнче районти предприятисемпе организацисен, ассоциацисен ертӳçисем хушшинче "Хĕрхенӳллĕ чĕре" конкурс пĕлтерчĕç, унăн тĕллевĕ - коллективсем халăхăн сахал тупăш илекен сийне - ватă çынсене тимлĕх уйăрасси. Итогсене ватă çынсен вунăкунлăхĕ хыççăн пĕтĕмлетĕç. Апла пулсан çав ятсене эпир часах пĕлĕпĕр.

**Л.ДИЛЬМУХАМЕТОВА,**
**халăха социаллă хӳтлĕх паракан управлени начальникĕ.**

## Тĕлпулу ресторанта иртрĕ

МПП ертӳçисем Ватă çынсен кунĕнче пире, пенсионерсене, уява улттăмĕш çул чĕнеççĕ ĕнтĕ. Ку хутĕнче тĕлпулăва хăна çурчĕн ресторанĕнче йĕркеленĕччĕ, сĕтелсем çине апат-çимĕç хатĕрленĕччĕ. Ветерансене МПП директорĕ Р.Г.Хисамов, унăн çумĕ Г.М.Ахметзянов, профком председателĕ Н.Г.Мерзанов, хăна çурчĕпе ресторан директорĕ Н.Н.Сидорова саламларĕç. Апат-çимĕçпе сăйларĕç, кĕвĕ янăрарĕ, ветерансем вырăсла, тутарла, чăвашла юрăсем юрларĕç. Юлашкинчен, пире автобуспа леçиччен, апат-çимĕç пуххисем пачĕç: 5 килограмм аш, 2 килограмм сахăр, 1 килограмм услам çу. Эпир куншăн питĕ савăнтăмăр, хальхи кăткăс вăхăтра вăл пирĕншĕн пысăк пулăшу пулса тăрать. Пире манманшăн предприяти ертӳçисене эпир тав тăватпăр.

**Пенсионерсен ятĕнчен вăрçăпа ĕç ветеранĕ Л.ПОЛИВАНОВА.**

## Туссем хушшинче ирттернĕ каç

Ватă çынсен кунĕнче Нурлат станцийĕнчи 135-мĕш номерлĕ ача сачĕн заведующийĕ Фарида Набиулловна Зартынова хăйĕн сăмахне çапла пуçларĕ: "Сирĕн ĕмĕрĕрсем вăрăм пулччăр, сире телейлĕ ватлăх сунатпăр". Çаплах вăл Куйбышев чугун çул тата вĕренӳ заведенийĕсен пайĕ Учительсен кунĕ ячĕпе янă саламлă телеграммăсене вуласа пачĕ. Унтан пуçтарăннисене профком председателĕ Н.П.Зинина ăшшăн саламларĕ. Хăнасене ачасем саламлама тытăнсан вĕсен сăн-пичĕ кулăпа çуталчĕ!

Хăнасене апат-çимĕçпе сăйларĕç, концерт кăтартрĕç. Çак каç пурне те килĕшрĕ. Сывлăхĕсем начар пулнипе килейменнисене килĕсене кайса саламларĕç.

Пенсионерсен ятĕнчен коллектива тата Фарида Набиулловнана пире манманшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн тав тăватпăр. Сире телей, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Пенсионерсен ятĕнчен А.Нестерова. Нурлат хули.**

## ПИРЕ МАНМАÇÇĔ

Пирĕн Хафизов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра, пире, пенсионерсене, манмаççĕ.

Акă Ватă çынсен кунĕнче те пире уяв ячĕпе саламларĕç, апат-çимĕç пуххисем пачĕç. Хуçалăх ертӳçине Валерий Федорович Булатова Ватă çынсен кунĕ ячĕпе парнесем панăшăн, çак йывăр вăхăтра пире манманшăн тав тăватпăр. Малалла та тăрăшса ĕçлеме ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хăват сунатпăр.

**Уксăмлă ялĕн пенсионерĕсем: В.П. тата Н.С.Паруковсем, М.Майкова.**

## КĂМĂЛА ÇĔКЛЕРĔÇ

Тăрăшсан, укçатенкĕ сахал пулсан та çынсен кăмăлне çĕклеме пулать. Çакăн пек пĕтĕмлетӳ турăмăр эпир, "Сельхозтехника" акционер обществин пенсионерĕсем. Предприятире финанс лару-тăрăвĕ йывăр иккенне ăнланса, эпир Ваттисен кунĕнче пире тимлĕх уйăрасса кĕтмен те. Анчах "Сельхозтехника" ертӳçисем пире валли апат-çимĕç пакечĕсем хатĕрлеме май тупнă. Ватă çынсен ятĕнчен предприяти ертӳçине А.В.Мулюкова пирĕншĕн тăрăшнăшăн тав тăвас тетпĕр. Сире çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçлăхсем сунатпăр.

**А.ХАСАНОВА, пенсионерка.**

## Салху уяв

Тен, ытти çĕршывсенче çак кун - уяв, савăнăç кунĕ пулĕ, эпĕ Ватă çынсен кунĕ пирки калатăп, пирĕн ватăсене вара çак кун вĕсен йывăр пурнăçне, салху ватлăхне, ыранхи куна шанăç çуккине тепĕр хут аса илтерет.

Çак кун ваттисене кам мĕнле хисеплениие кăтартрĕ. Хăшĕсем хăйсен пенсионерĕсене, маларах ĕçленисене, коллективсенче саламланă, хаклă мар, çапах та парнесем е апат-çимĕç пуххисем панă, теприсем вара...

Хăшĕсен ачисем ватă ашшĕ-амăшне саламласа панулмипе, çăралатнă сĕтпе хăналанă, теприсем вара килĕсенче чăтма çук лару-тăру йĕркеленĕ, ӳстерсе ура çине тăратнă ачисен чунсăрлăхне пула кинемейсемпе мучисене хăйсен килĕнче те вырăн пулман.

Чулпан больницин геронтологи уйрăмĕнче телейсĕр, пĕччен çынсем пурăнаççĕ, "тăванĕсем" ултавпа хваттерне туртса илсе нимсĕр тăратса хăварнисем те пур. Ватă та чирлĕскертен мĕн усси? Асап кăна вĕсенчен, çапла пулса тухнă та Нурлатри Ленин урамĕнче пурăннă Х. хĕрарăмпа.

Тĕнче ырă çынсемсĕр мар, вĕсем вара, "Ветеран" клуб членĕсем, Чулпана çак уйрăмра пурăнакансене курма, ватăсене парнесемпе тата концертпа савăнтарма, вăхăтлăха та пулин салху туйăмне, чире сирсе яма килнĕ.

"Ветеран" хор тата культура çурчĕн пултарулăх артисчĕсем (ертӳçи Т.С.Бадыгин) вырăс, тутар тата чăваш юррисене илемлĕ шăрантарчĕç. "Ветеран" клуб председателĕ К.В.Изотова тăрăшнине те палăртса хăвармалла.

Медперсонал кунта пурăнакансемшĕн тăрăшать, чирлисене пăхать, çитерет, пур çĕрте тасалăх хуçаланать.

Администрацин социаллă хӳтлĕх паракан управленийĕ час-часах çакăн пек ыркăмăллăх рейчĕсем йĕркелет. Халĕ те акă продуктсем: çăнăх, çу, кăлпасси, макарон изделийĕсем, сахăр илсе килнĕ, вĕсене элеватор, апат-çимĕç комбиначĕн, сĕт-çу завочĕн тата сахăр завочĕн ертӳçисем панă.

Ватă çынсене ветерансен Совечĕн председателĕ И.У.Гилязев тата социаллă хӳтлĕх паракан управлени начальникĕ Л.Н.Дильмухаметова саламларĕç, вĕсен кăмăлне çĕклерĕç.

Тĕлпулăва хутшăннисем хумхануллă сывпуллашрĕç, ватăсем тав турĕç. Вĕсене пурте сывлăх тата тӳсĕмлĕх сунчĕç, ыран вара мĕн кĕтни çинчен пăшăрханса лайăх вăхăтсем çитессе шантарса лăплантарчĕç.

Çапла калас килет: çынсем, пурне те йывăр, анчах темле йывăрлăхра та, экономика, политика лару-тăрăвĕнче те хăвăрăн тата ытти ватăсене ан манăр, пӳрт-çурта, çăкăр тавара вĕсемпе пайлăр, пулăшма тăрăшăр, мĕн ĕлĕкрен ачасемпе ватăсене мĕнле пăхниинчен халăхăн ăслăхлăх шайне, ăс-тăн культурине, ыркăмăллăхне хакласçĕ вĕт.

**Л.ТАФЕЕВА. Нурлат хули.**



*Кĕр çитсессĕн-и? Сывлăш та усă,*
*Шур тĕтре е сив çумăр ирпе.*
*Тăкăнать, тăкăнать сарă çулçă,*
*Витĕнет çĕр хитре кавирпе.*

Нина АРТЕМЬЕВА.

*Спорт *Спорт

## Чăваш хĕрĕ - малта

***Хусанта иртнĕ 18-мĕш марафона 38 çын хутшăннă. Хĕрарăмсенчен Шупашкарти Надежда Гусельщикова финиша пĕрремĕш çитнĕ.***

***Хĕрĕх икĕ километра Чăваш Ен хĕрĕ нумай арçынна кая хăварса, 2 сехет те 51 минут та 54 çеккунтра чупса тухнă.***

## Çутçанталăк тата эпир

# Тискерлĕх

- Атьăр-ха, хурăнлăха кăмпа пуçтарма каяр, - шăнкăравларĕ пĕррехинче районцентрта пурăнакан пĕлĕш.

- Килĕр, кайăпăр, - хуравларăм эпĕ, хам шухăшша путрăм: ку кăçал пирĕн пĕрремĕш поход вĕт...

Çак хурăнлăхра акатуйсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансен, уй-хир ĕçченĕсен слечĕсем ирттнине аса илме тытăнтăм. Вăл ял çыннисен кану вырăнĕ пулса тăрать, çавăнпа та ăна вĕсем сăваплă упраççĕ. Мазит Насыбуллинпа Асгат Батретдинов (вилнĕ) пĕчĕк хунавсене выльăхсем таптасран сыхланине çирĕклĕсем хисеплесе аса илеççĕ.

... Кăмпа çав тери нумайччĕ, эпир хамăрăн карçинккасене хăвăрт тултартăмăр. Пиртен маларах та кунта пуçтарни сисĕнчĕ, анчах пире валли те çителĕклĕ юлнă-ха. Çутçанталăк хăйĕн пуянлăхне пире тараватлă парнеленĕшĕн мĕнле тав тумăн-ха.

Çав вăхăтра пĕлĕшĕн сасси илтĕнчĕ:

- Кил-ха кунта...

Эпĕ ун патне çитсен, тĕпĕнченех каснă хурăна куртăм.

- Çакна çуркунне тунă, - пĕтĕмлетрĕ пĕлĕш.

Йывăç хуçăкĕсем курăнчĕç, пирĕн кăмăл пăсăлчĕ.

- Мĕнле тискерлĕх. Йывăçа касма камăн алли çĕкленнĕ-ши? - тарăхрăмăр эпир. Анчах вăрман шăп тăчĕ, преступлени тунăшăн кама айăплăн-ха...

**И.ШАЙХИЕВ,**
**Çирĕклĕ ялĕ.**

# "Трактор" операци

Кăçалхи сакăр уйăх хушшинче республикăра тракторсен, хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсен водителĕсем 55 çул-йĕр инкекĕ тунă, унта 14 çын вилнĕ, 50-шĕ ӳт-пӳ енчен суранланнă.

Транспорт хатĕрĕсен çак категорийĕн çулпа çӳрессин хăрушсăрлăхне тивĕçтерес тĕллевпе 1993 çултанпа республикăра "Трактор" операци ирттереççĕ. Вăл транспорта регистрацилес, патшалăх техника тĕрĕслевне ирттерес, тракторист-машинистсен транспорт дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе лайăх енчен палăрать. Тракторсемпе, хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе усă курассин хăрушсăрлăхне тивĕçтермелли ыйтусем тĕлĕшпе ирттернĕ мероприятисем ăнăçлă пулнине шута илсе октябрĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 15-мĕшĕччен республикăра "Трактор" уйăхлăх иртет. Уйăхлăх вăхăтĕнче хăй тĕллĕн çӳрекен техникăн шайне, усă курма ирĕк пуррине, тракторсене хытăлăх каркасĕсемпе тивĕçтернине, вăл çулпа çӳрессин хăрушсăрлăхĕн требованийĕсемпе килĕшсе тăнине тĕрĕслĕç.

Раççей Федерацийĕн МВД указанийĕпе килĕшӳллĕн 1998 çулта патшалăх техника тĕрĕслевне ноябрĕн 1-мĕшĕччен тăснă. Транспорт хатĕрне патшалăх техника тĕрĕслевне ирттермелли вырăна илсе килме май пулмасан (юсавсăр пулсан, запас пайсем пулмасан) унăн хуçи ГИБДД çырнă заявлени, техника тĕрĕслевĕшĕн тӳленĕ квитанци тата медицина справки, патшалăх номер паллисене, унччен патшалăх техника тĕрĕслевĕ иртнине çирĕплетекен талонсене тăратмалла.



Техника тĕрĕслевĕ иртмен автотранспорт хатĕрĕсен хуçисен çак транспорт хатĕрĕсемпе çӳреме юрамасть, çакăн пек водительсене чарсан ГИБДД инспекторĕсем патшалăх паллисене туртса илеççĕ, вĕсене администраци енчен явап тыттараççĕ.

**З.ХУСНУЛЛИН,**
**Нурлатри ГРОВД аслă госавтоинспекторĕ, милици капитанĕ.**

# *Студентсем кулаççĕ*

Студент лавккана кĕрет:

- Çав пушмак мĕн хак?

- 300 тенкĕ.

Каччă тĕлĕннипе шăхăрсах ярать.

- Леш шурă пушмакĕ тата?

- Сана иккĕ шăхăрмалăх.

* * *

Университета кайнă чух:

- Çеруш, бензин хаклăланнă тет. Тĕрĕсех-и çавă?

- Мĕншĕн кулянатăн, санăн çăмăл машина çук вĕт.

- Ара, зажигалка пурçке.

* * *

Яла килнĕ агроном, тин çеç диплом илнĕскер, çынсемпе калаçать:

- Эпĕ хула çынни, мĕнле пурăнас ман ялта?

- Темех мар, тепĕр уйăхран хăнăхса çитетĕн.

- Тепĕр уйăхран? Эппин, унччен хулана кайса пурăнам.



# Пĕлтерӳсем

## *Сутатпăр:*

***50 лет Победы проспектĕнчи гараж. Телефон: 5-20-86.***

* * *

***Туй кĕпи, хаклă мар. Телефон: 5-22-65.***

* * *

***3 пӳлĕмлĕ хваттер, 3-мĕш хутра. Телефон: 5-21-04, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.***

* * *

***"Ауди-80" (пичке). Телефон: 2-14-30.***

* * *

***1992 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106. Телефон: 5-39-39.***

* * *

***Пĕчĕк çемье пурăнмалли хваттер,васкавлă. Адрес: Советская урамĕ, 195-24.***

* * *

***Суворов урамĕнчи мечĕт патĕнчи уйрăм çурт, хаклă мар. Адрес: Заводская урамĕ, 15-9, посредник урлă.***

* * *

***Виçĕ пӳлĕмлĕ щитлă çурт, леççех паратăп (35 пин тенкĕ). Телефон: 8-235-5-65-19.***

## *Улăштаратпăр е сутатпăр:*

***ВАЗ-2106, УАЗ (санитарка) тата пĕр пӳлĕмлĕ хваттере Нурлат хулинчи çуртпа е хваттерпе. Адрес: Пионерская урамĕ, 36.***

* * *

***1997 çулта туса кăларнă çĕнĕ УАЗ-3151400 çав çулта туса кăларнă "Жигулипе". Адрес: Çарăмсан районĕ, Лашманка ялĕ, Давлетшин, телефон: 2-92-80.***

* * *

***3 пӳлĕмлĕ хваттере 2 е 1 пӳлĕмлисемпе. Телефон: 2-17-36.***

* * *

***2 пӳлĕмлĕ хваттере пĕр пӳлĕмлипе (хушса тӳлесе). Адрес: Заводская урамĕ, 5-15.***

* * *

## *УЛĂШТАРАТПĂР:*

***Çыранçи Чаллăри икĕ пӳлĕмлĕ хваттере Нурлатри икĕ пӳлĕмлипе, урăхла вариантсем те пулма пултараççĕ. 2-22-50 номерпе Гульнарăна ыйтмалла.***

## *Тĕрли:*

***Çемье хваттер тара илет. Телефон: 5-33-89, 8 сехетрен тытăнса 17 сехетчен шăнкăравламалла.***

* * *

***Строительсем çинчен информаци паратăп (тӳлевсĕр), паха тăваççĕ. Телефон: 5-16-26, Назип.***

* * *

***"Тĕрнеçри спиртзавод" ГУПра ĕçлеме инженер-механик, тĕп энергетик, электрик-обмотчик кирлĕ, çак специальноçсемпе ĕç стажĕ пулмалла.***

## *ТУПНĂ ЯПАЛАСЕН СĔТЕЛĔ:*

***Парикмахерскин арçынсен залĕнче джинс куртка тата бейсболка манса хăварнă. Япаласен хуçине пырса илме ыйтатпăр.***

### *Нурлат райповĕн апат-çимĕç комбинатне яланлăха ĕçлеме кирлĕ:*

***электрик, платник, инженер тепло-техник, çăкăр турттаракан ГАЗ-53 машина водителĕ. Директортан ыйтса пĕлмелли телефон: 2-16-04, 8 сехетрен тытăнса 17 сехетчен шăнкăравламалла.***

***К.Маркс урамĕнчи 27-мĕш номерлĕ çуртра вырнаçнă "Хозяюшка" магазинта паха сортлă çăнăх - пĕр миххин хакĕ 125 тенкĕ, сахăр песокĕ - пĕр миххин хакĕ 375 тенкĕ сутаççĕ.***

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3966